26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
ФЕВРАЛЬ
6
ВЫРСАРНИКУН
26(6521) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Арми генералне ВАТУТИНА

УКРАИНАРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, çăмăллăн куçса çӳрекен соединенисемпе пехота çав тери хăвăрт пырса çапнипе тата тăшмана çавăрса илмелли ăста маневр тунипе, Украинăри пысăк область центрĕсене — ЛУЦК, РОВНО хулисене çавăн пекех тата ЗДОЛБУНОВ хулипе паха чугун çул узелне тытса илнĕ.

ЛУЦК, РОВНО тата ЗДОЛБУНОВ хулисене тытса илессишĕн пынă çапăçусенче ПУХОВ генерал-лейтенантăн, БАРАНОВ генерал-лейтенантăн, СОКОЛОВ генерал-лейтенантăн, КИРЮХИН генерал-лейтенантăн, ГЛУХОВ генерал-лейтенантăн, МАНСУРОВ генерал-майорăн, ВАСИЛЬЕВ генерал-майорăн, ХРУСТАЛЕВ генерал-майорăн, ЗУБОВ генерал-майорăн, БОРЩЕВ полковникăн, ПАВЛОВ генерал-майорăн çарĕсем, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн НОВИКОВăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн КОРОЛЕВăн, ПУШКАРЕВ полковникăн танкисчĕсем, артиллери генерал-майорĕн КУБЕЕВăн артиллерисчĕсем тата БАРАШ полковникăн саперĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чăçсене «ЛУЦКИ» тата «РОВЕНСКИ» тесе ят пама тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 5-мĕшĕнче, 21 сехетре, пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, ЛУЦК, РОВНО, ЗДОЛБУНОВ хулисене тытса илнĕ хамăрăн паттăр çарсене Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Питĕ чаплă çапăçнăшăн Эсир ертсе пыракан мĕнпур çарсене, ЛУЦК, РОВНО, ЗДОЛБУНОВ хулисене ирĕке кăларассишĕн пынă çапăçусенче пулнăскерсене, ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пыракан кĕрешӳре вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ
И. СТАЛИН.

1944 çулхи февралĕн 5-мĕшĕ.

Чăваш АССР Совнаркомĕнче

Литературăн, искусствăн, историн чи лайăх произведенине çырас е тăвас тĕлĕшпе юбилей ячĕпе конкурс туса ирттересси çинчен

Оригиналлă тата питĕ илемлĕ произведенисем тăвас тесе, Чăваш АССР Совнаркомĕ Чăвашсен Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республики 25 çул тултарнă тĕле литературăн, искусствăн, историн (прозăн, поэзин, драматургин, живописĕн, графикăн, скульптурăн, музăкăн, чăваш халăхĕн историйĕн, чăваш литературин историйĕн) чи лайăх произведенине çырас е тăвас тĕлĕшпе правительство конкурсне туса ирттерме йышăннă.

Конкурса литературăпа искусствăн çырса пĕтернĕ, оригиналлă, халиччен пичетленмен произведенийĕсене тăратмалла, вĕсене Отечественнăй вăрçăн тата тылри ĕçĕн темисемпе—чăваш халăхĕн пурнăçĕпе çыхăнса тăракан темăсемпе çырмалла. Литература произведенийĕсене чăвашла та вырăсла та çырма юрать. Калавсен сборникĕсем, повеçсем, романсем 5 авторски листран пĕчĕккĕ пулмалла мар, поэмăсем сăвăласа çырнă повеçсемпе романсем 1.000 йĕркерен кая пулмалла мар, драмăсем, трагедисем, комедисем пĕр актлă тата нумай актлă пулма пултараççĕ. Çак хаклă кăтартнă йышши произведенисем ачасем валли çырнăскерсем те пулма пултараççĕ.

Живопиç тĕлĕшпе —çуллă сăрăпа, пастельпе, акварельпе т. ыт. те çырнă картинăсем тăратма юрать, вĕсен жанрĕ кирек мĕнле те пулма пултарать (портрет, пейзаж, композици); музыка тĕлĕшпе— оперăсем, музыкăллă комедисем, симфонисем, кантатăсем, юрăсем т. ыт. те тăратма юрать; истори тĕлĕшпе тата литературăпа чĕлхе историйĕ тĕлĕшпе—наукăллă произведенисем тăратма юрать, вĕсем 4—5 пичетлĕ листран пĕчĕккĕ пулмалла мар.

Пур йышши произведенисем валли 18 премия тунă: 15.000-шер тенкĕлĕх пĕрремĕш премисем уйтă, 10.000-шер тенкĕлĕх иккĕмĕш премисем уйтă, 5.000-шер тенкĕлĕх виççĕмĕш премисем уйтă, кунсăр пуçне тата 1.000-шер тенкĕлĕх хавхалантармалли премисем уйтă тунă.

Пур произведенисене те конкурса 1944 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен девизпа тăратмалла, литература произведенийĕсене машинкăпа пичетлесе, живописпе скульптура произведенийĕсене кирлĕ пек чĕркесе ямалла.

Халиччен пĕтĕмпех е пĕр пайне çеç пичетленĕ произведенисене конкурса пăхмаççĕ.

Конкурсăн жюрине Совнарком çирĕплетнĕ. Унта çак юлташсем кĕреççĕ: М. А. Андреев—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ, З. А. Андреева—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ, И. К. Иванов—ВКП(б) Обкомĕн пропаганда тĕлĕшпе ĕçлекен секретарĕ, К. Е. Евлампьев—Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕн заместителĕ, М. П. Макаров—Çутĕç Халăх Комиссарĕ, А. Д. Калган—Искусство управленийĕн начальникĕ, А. А. Эсхель—Писательсен союзĕн правленийĕн председателĕ, С. С. Макаров—«Красная Чувашия» хаçат редакцийĕн парти пурнăç отделĕн заведующийĕ, М. С. Спиридонов—РСФСР-ăн тата Чăваш АССР-ĕн искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Художниксен союзĕн правленийĕн председателĕ, Г. Г. Лисков—Чăваш АССР-ĕн искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, П. Н. Осипов — Чăваш АССР-ĕн искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, драматург, С. В. Эльгер—Чăваш АССР-ĕн халăх поэчĕ, П. Г. Григорьев—Наукăпа тĕпчев институчĕн директорĕ.

Литература произведенийĕсене Писательсен союзĕн правленине ямалла (Шупашкар хули, Володарский урамĕ, 5, Пичет çурчĕ, 9-мĕш пӳлĕм), живопись, графика, скульптура, музыка произведенийĕсене Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство управленине ямалла (Шупашкар хули, Ленинградская урам, Советсен Çурчĕ).

Пурăнмалли çуртйĕр тата коммунальнăй предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсем

Чăваш АССР Совнаркомĕ, пурăнмалли çуртйĕр тата коммунальнăй предприятисен социализмлă ăмăртăвĕн 1943 çулхи декабрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ăмăртура Çĕмĕрлери коммунальнăй прачечнăй, Шупашкарти коммунальнăй парикмахерски хуçалăхĕпе коммунальнăй хуçалăхăн обозĕ мала тухнă тесе йышăннă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Çĕмĕрлери коммунальнăй прачечнăйрах (директорĕ Клибышев юлташ, коммунальнăй хуçалăх заведующийĕ Анишков юлташ) хăвармалла тунă тата ăмăртура палăрнă рабочисене премилеме 5 пин тенкĕ укçа пама йышăннă.

Шупашкарти коммунальнăй парикмахерски хуçалăхне (заведующийĕ Нигал юлташ) 3 пин тенкĕ укçа (пĕрремĕш преми), коммунальнăй хуçалăхăн обозне (заведующийĕ Павлов юлташ)—2 пин тенкĕ укçа (иккĕмĕш преми) пама йышăннă.

Çавăн пекех Совнарком 1943 çулхи декабрь уйăхĕнче аренда укçине хватгер укçи пухас тата капитальнăй ремонт тăвас тĕлĕшпе Канаш горжилуправленийĕ (начальникĕ Косикова юлташ) аван ĕçленине палăртнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 4-мĕшĕнче НАРВА хули енче пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, темиçе ял тытса илнĕ. Пирĕн çарсем Финн заливĕн çыранĕсене Нарва шывĕн вăрри таран тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă.

Пирĕн ЧУДСКИ кӳлĕ хĕррипе тата унтан хĕвелтухăçнерехре наступлени туса пыракан çарсем темиçе ял тытса илнĕ.

СИВЕРСКИЙ станцийĕнчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, МХИ, ВЛАДЫЧКИНО, ЛУЖКИ ятлă ялсене тата НИЗОВСКИЙПЕ МШИНСКАЯ ятлă чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ.

ЛЮБАНЬ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем нимĕçсен вăрман çулĕсем çинчи инженерла чăрмавсене сире-сире, тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, ПОДДУБЬЕ, ЯЗВИНКА, КУБОЛОВО, ПУСТОЕ РЫДНО, ЗАМЕЖЬЕ, БЕРЕЗНИЦЫ, ЗАРУЧЬЕ, ВЕРЯЖИНО, ЗАМОСТЬЕ, БЕРЕЗНО, ВОЛЬНИЕ КУСОНИ ятлă ялсене тытса илнĕ. Пирĕн çарсем НОВГОРОД хулипе ЛЕНИНГРАД хушшинчи чугун çула тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă.

НОВГОРОД хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕнтере-çĕнтере тата унăн контратакисене сире-сире ярса çаплах малалла тапăнса пынă, çапăçусенче темиçе ял тытса илнĕ.

ЗВЕНИГОРОДКĂПА ШПОЛА хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем çаплах тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă, МАЛЫЙ РЖАВЕЦ, ГАМАРНЯ, КОНОНОЧЬ, ХМЕЛЬНА, МИХАЙЛОВКА, МОШНЫ, ВОРОНОВКА ятлă ялсене тытса илнĕ. Пирĕн авиаци фронтăн çак участокĕнче тăшманăн транспорт самолечĕсемпе ăнăçлăн çапăçнă. Сывлăшри çапăçусенче виçĕ моторлă «Ю—52» йышши 13 транспортнăй самолет персе ӳкернĕ тата анса лармалли площадкăсем çинче çавăн пек транспортнăй 60 самолета пĕтерсе тăкнă.

Февралĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 78 танкне персе çĕмĕрнĕ е пĕтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 43 самолетне персе ӳкернĕ тата унсăр пуçне анса лармалли площадкăсем çинче 60 самолет пĕтерсе тăкнă.

☆ ☆ ☆

Нарва хули енче пирĕн çарсем, малалла куçса пырса, Финн заливĕн çыранĕсене Нарва шывĕн вăррине çитиччен нимĕçсенчен пĕтĕмĕшпех тасатнă. Пĕр чаçри боецсем, тăшмана çавăрса илмелли хăюллă маневр туса, нимĕçсен тĕреклетнĕ пунктне хупăрласа илнĕ те хаяр çапăçура нимĕçсен пĕр батальон пехотине пĕтерсе тăкнă. Трофейăсем тытса илнĕ, вĕсен шутĕнче юсавлă 4 танк. Çав районра пирĕн боецсем Советлă Эстони республикин çыннисен пĕр ушкăнне, нимĕçсем оборона строительствине ирĕксĕр мобилизациленĕскерне, ирĕке кăларнă.

* * *

Чудски кӳлĕ çыранĕсем тăрăх тата унтан хĕвелтухăçнерехре наступлени туса пыракан пирĕн çарсем чылай ялсене тытса илнĕ. Совет чăçĕсем, партизансемпе пĕрле кĕрешсе, нимĕçсен тĕреклетнĕ пункчĕсене аркатаççĕ, тăшмана пысăк çухатусем кӳреççĕ. Кун каçиччен çапăçусенче тăшманăн 1.200 салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. Пĕр яла йышăнса илнĕ чухне совет боецĕсем нимĕçсен 300 салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

* * *

Сиверский станцийĕнчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса темиçе ял, çавăн пекех Низовский тата Мшинская чугун çул станцийĕсене тытса илнĕ. Пирĕн пĕр танковăй часть малалла хăвăрттăн куçса пырса, тăшман автоколоннине атакăланă. Совет танкисчĕсем çар хатĕрĕсем турттарса пыракан 40 автомашинăна пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен çав автоколоннăна сыхласа пыракан автоматчикĕсен ротине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн боецсем каялла чакакан гитлеровецсен тылне тухнă. Пăшалпа тата пулеметсемпе персе, тăшмана сапаласа янă. Çул çинче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 220 вилли выртса юлнă. Тăшман çав çул çинчех 7 тупă тата темиçе йывăр миномет, боеприпассемпе пĕрлех, пăрахса хăварнă.

* * *

Новгород хулинчен хĕвеланăçнерехре тăшман, пирĕн наступлени туса пыракан чăçсене чарма хăтланса, темиçе контратака тунă. Пирĕн чăçсем гитлеровецсен контратакисене пурне те сирсе янă та, малалла куçса пырса, темиçе ял тытса илнĕ. Нимĕçсен 600 салтакĕпе офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, 9 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тупписене çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ.

* * *

Звенигородкăпа Шпола хулисенчен çурçĕртерехре пирĕн çарсем тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтерсе тăкассишĕн çапăçнă. Нимĕçсем, контратакăсем тăва-тăва, вăйсăртарах вырăн тупса тимĕр улкăран хăтăлса тухасшăн тăрмашаççĕ. Пирĕн çарсем гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем кӳнĕ. Пĕр соединени чăçĕсем, çавăрса илнĕ ушкăна хĕссе пырса, тăшмана чылай ялсенчен çапса кăларнă. Нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 2.000 çынна çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕн тепĕр соединени кун каçиччен хи çапăçусенче нимĕçсен 26 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă тата 800 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Нимĕçсем çавăрса илнĕ ункăри хăйсен çарĕсене пырса пулăшма хăтланнă, вĕсем танксăй атака пуçласа янă. Совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем нимĕçсен 32 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, тăшмана каялла ывăтса янă.

Пирĕн авиаци нимĕç çарĕсене çавăрса илнĕ ункăри районра вырнаçса тăракан аэродромсемпе анса лармалли площадкăсене сывлăшран хупăрласа тăрать. Совет штурмовикĕсемпе истребителĕсем февралĕн 2-мĕшĕнче «Юнкерс-52» йышши транспортнăй 16 самолета тĕл тунă. Сывлăшри çапăçура пирĕн летчиксем тăшманăн 11 самолетне персе ӳкернĕ. Паян пирĕн авиаци нимĕçсен транспортнăй самолечĕсен пысăк ушкăнне, истребительсем хӳтĕленипе малалла вĕçсе пыраканскерсене, пӳлсе лартнă. Совет летчикĕсем тăшмана атакăланă та сывлăшри çапăçура транспортнăй 13 самолета тата 10 истребителе персе ӳкернĕ. Паянах каç пулса çитиччен тăшманăн çавăрса илнĕ группировки тăракан районра нимĕçсен 3 моторлă транспортнăй 60 самолетне çĕр çинче пĕтерсе тăкнă.

* * *

Хура тинĕс флочĕн авиацийĕ тăшман суднисен караванне пырса çапнă. Бомбăсем тӳррĕмĕнех пырса тивнипе, тăшманăн пĕтĕмĕшпе 4.000 тонна таякан виçĕ суднине, 1000 тонна таякан пĕр баржине, пĕр десант баржине тата тиĕ грузсем турттаракан 2 баржине шыва путарнă.

* * *

Ленинград облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕсем пĕр каçра тăшман тылĕнче темиçе чугун çул станципе разъезд тытса илнĕ. Совет патриочĕсем 4.500 рельсăна, 3 чугун çул кĕперне сирпĕнтерсе янă тата телеграфпа телефон çыхăнăвĕн линине темиçе километр тăршшĕнче тата-тата тухнă. Çав операци вăхăтĕнче партизансем нимĕçсен техникăпа çар пурлăхĕ турттарса пыракан 3 эшелонне сирпĕнтерсе янă, 400 гитлеровеца ытла пĕтерсе тăкнă. Партизансем 2 чугун çул участокне тĕрĕслесе тăраççĕ, нимĕçсене çав участоксем çинче поездсем çӳрессине йĕркелеме памаççĕ.

Эфиопин чрезвычайнăй посланникĕ тата полномочнăй министрĕ Л. Таэзас господин хăйĕн верительнăй грамотисене СССР Верховный Совет Президиумĕн Председательне М. И. Калинин юлташа пани

1944 çулхи февралĕн 3-мĕшĕнче, кăнтăрла, 1 сехетре, Кремльте СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Эфиопин чрезвычайнăй посланникне тата полномочнăй министрне Л. Таэзас господина йышăннă. Л. Таэзас господин М. И. Калинин юлташа хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

Л. Таэзас господинпа пĕрле Эфиопи миссийĕн 2-мĕш секретарĕ Б. Тессема господин пулнă.

Верительнăй грамотăсене панă чухне СССР Ют çĕршывсен Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин юлташ тата СССР Наркоминделĕн протокол отделĕн заведующийĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ Г. И. Фомин юлташ пулнă.

Верительнăй грамотăсем илнĕ хыççăн М. И. Калинин юлташ Л. Таэзас господинпа каласнă.

Ялсовет депутачĕсен отчечĕсем пуçланчĕç

СЕНТЕР, февралĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районра ĕнер ялсовет депутачĕсен отчечĕсем пуçланчĕç. Отчетсене ирттерме райсовет исполкомĕ план тунă, ăна кашни ялсовечĕ патне çитернĕ. Ку таранччен 8 ялта отчетсем туса ирттернĕ.

Атабай ялсовечĕн председателĕ Быкова депутат февралĕн 4-мĕшĕнче Атабай ялĕнче отчет туса пачĕ. Отчетлă пуху лайăх иртрĕ. Пухура самокритика та вăйлă пулчĕ. Суйлавçăсем ялсовечĕн тата депутатсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хытă критиклерĕç.

Калайкасси ялĕнче те отчетлă пуху лайăх иртрĕ. Пухăва 72 суйлавçăран 71-шĕ пынă. Кӳрекаç ялĕнче ялсовет исполкомĕн председателĕ Крючков депутат тата ялсовет депутачĕсем Гусевпа Сапожников юлташсем хăйсен ĕçĕсем çинчен отчетсем туса пачĕç. Суйлавçăсем вĕсене ĕçре пурнăçа кĕртме сĕнӳсем чылай пачĕç.

Калас пулать, хăшпĕр ялсовечĕсем çак отчетлă кампани политика тĕлĕшĕнчен ответлă ĕç пулса тăнине ăнланса илмен-ха. Çавăнпа та отчетлă пухусене ирттерессине кирлĕ пек организацилемеççĕ. Сĕнтĕр ялсовечĕн планĕ тăрăх, Тутаркасси ялĕнче отчетлă пухăва февралĕн 4-мĕшĕнче ирттермелле пулнă. Пухура Викторова депутатăн отчет туса памалла. Анчах Викторова район центрĕнче пулнă пирки, отчетлă пуху пулман.

Райсовет исполкомĕн, отчетсене ирттермелли плана вырăнсенче мĕнле пурнăça кĕртнине куллен тĕрĕслесе тăрса, çитменлĕхсене çийĕнчех пĕтерсе пымалла.

Т. ИВАНОВ.

Паттăр Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарас умĕн

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялĕнчи «Труд» артель коллективĕ Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă куна производствăри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илессишĕн ăмăртăва тухрĕ. Артель январь уйăхĕнчи производство планне 141,1 процент пурнăçларĕ. Çĕвĕ çĕлекен цех (бригадирĕ К. Петрова) уйăхри задание 150 процент таран тултарчĕ. Çак цехри стахановкăсем Х. Иванова, А. Яковлева, Н. Иванова, Е. Осипова юлташсем кашни кунах задание 160—200 процент тултарса пыраççĕ.

Çавăн пекех алсасем çĕлекен цех коллективĕ те ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пырать. Иртнĕ уйăхра задание вăл 160 процента яхăн пурнăçларĕ. Н. Журикова, М. Боголюбова юлташсем уйăхри задание 180 процент чухлĕ пурнăçларĕç.

Халĕ пур рабочипе работница та, паттăр Хĕрлĕ Çар 26 çул тултарнă тĕле татах та тухăçлăрах ĕçлесе, февраль уйăхĕнчи ĕç планне 10 кун малтан пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Кĕрĕксем çĕлекен цехра ятарласа комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади организациленĕ. Вĕсем задание кашни куллен 200—250 процент тултараççĕ.

П. ЛЕНАР.

* * *

ШĂХАСАН. Райпромкомбинатри рабочисемпе работницăсем Хĕрлĕ Çар уявне задание икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарнипе кĕтсе илессишĕн тăрăшаççĕ.

Райпромкомбинат коллективĕ, январь уйăхĕнчи задание 122 процент пурнăçланă пулсан, февраль уйăхĕнче 150 процентран кая мар тултарма пулчĕ. Паллă стахановецсем — А. Коровенко, А. Васильева, В. Алексеева юлташсем задание кулленех 200 процент тултараççĕ.

К. ПЛАТОНОВ,
Райпромкомбинат управляющийĕ.

Планран ирттерсе 145 пин тенкĕлĕх продукци парассишĕн

Йĕпреç районĕнчи апат-çимĕç комбиначĕ (директорĕ А. Соловьев юлташ) 1943 çула производство планне 220 процент тултарнипе вĕçленĕ, çапла вара вăл планран ирттерсе 125 пин тенкĕлĕх продукци кăларнă.

Ку комбината 1943 çулхи июль уйăхĕнче организациленĕ. Чи малтанах вăл варенипе сăра тăвас ĕçе тытăннă. Ĕçлеме çăмăл пулман, мĕншĕн тесе апат-çимĕç комбиначĕ валли уйрăм çурт пулман, ĕçлеме кадрсем те кирлĕ пулнă.

Кăçалхи çул комбинат коллективĕ татах та çĕнĕ продукцисем кăларса, планран ирттерсе 145 пин тенкĕлĕх продукци кăларма обязательство илчĕ. Çак кунсенче комбинат валли 4 цех вырнаçмалăх çĕнĕ çурт турĕç. Унта конфет, сироп тăвакан цехсем те пулаççĕ. Кунсăр пуçне комбинат хурт-хăмăр ĕрчетес ĕçе тытăнать.

Иртнĕ çулта двигательпе ĕçлекен арман çăнăх авăртмалли плана 126 процент пурнăçланă. Кăçал ку арманта кашни куллен 9-шар тонна тырă авăртма шутлаççĕ.

Иртнĕ кĕркунне комбинат 15 тонна купăста, 3 тонна кăмпа тăварласа хунă, 3 тонна çĕр çырли типĕтнĕ. Паллă стахановка К. Белова юлташ кулленхи задание 200 процент тултарать. Вăл çамрăксене варени тăвас ĕçе вĕрентрĕ.

Комбинатри кашни рабочипе работница ĕç тухăçлăхне хăпартма пулса, хăйсем çине конкретлă обязательствăсем илчĕç. Январь уйăхĕнчи ĕç планне комбинат коллективĕ 150 процента çити пурнăçларĕ.

Ф. МАЛЫШКИН.

Чугун çул валли—вутă

Республикăри районсем чугун çул валли вутă хатĕрлемелли çулталăкри плана (1943 çулхи июлĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи январĕн 31-мĕшĕччен) мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА

Районсем	Плана тултарнă (процентпа): Турттарас енĕпе	Плана тултарнă (процентпа): Хатĕрлес енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Турттарас енĕпе	Мĕнле вырăнта тăрать: Хатĕрлес енĕпе
Йĕпреç	72,0	75,0	1	2
Вăрнар	68,3	80,0	2	1
Шăхасан	64,1	71,6	3	4
Шупашкар	58,1	66,4	4	8
Первомайски	58,3	67,6	5	6
Ишлей	58,3	51,2	6	18
Сĕнтĕрвăрри	57,5	73,4	7	3
Канаш	54,2	64,6	8	9
Етĕрне	51,2	54,1	9	13
Елчĕк	50,5	53,5	10	15
Калинино	50,0	71,3	11	5
Вăрмар	50,0	66,8	12	7
Улатăр	50,0	61,4	13	10
Сĕнтĕр	49,1	44,5	14	24
Çĕмĕрле	48,9	47,6	15	20
Комсомольски	48,8	50,8	16	19
Октябрьски	46,6	41,6	17	27
Çĕрпӳ	45,6	61,1	18	11
Советски	45,5	46,4	19	22
Куславкка	44,3	43,0	20	25
Хĕрлĕ Чутай	43,2	53,7	21	14
Красноармейски	42,1	53,0	22	16
Пăрачкав	42,0	45,7	23	21
Элĕк	40,5	42,9	24	26
Тăвай	36,4	55,9	25	12
Чкаловски	30,7	41,9	26	23
Шăмăршă	29,0	51,6	27	17
Кувакино	26,1	33,4	28	28

Вăрман хатĕрлес ĕçре кая юлмалла мар

ВĂРМАР, февралĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Вăрнарти вăрман хуçалăхĕн коллективĕпе Шăхасан районĕнчи колхоз членĕсем республикăри вăрман ĕçĕнче ĕçлекенсене чĕнсе каланине районри колхозниксемпе колхозницăсем хапăл туса йышăнчĕç. Паянхи куна 8 колхоз вăрман хатĕрлевĕн кĕркуннепе хĕллехи вăхăтри планне пурнăçланăпа пĕрех. «Анис» колхоз (председателĕ Никселаев юлташ), вăрмана ĕçлеме çынсемпе лашасем планпа палăртнинчен икĕ хут ытларах ярса, хăйĕн заданине срокчен пурнăçларĕ.

Анчах та районри пур колхозсем те ку ĕçе кирлĕ пек тытăнман-ха. «Парижская Коммуна», «Ударник», Молотов ячĕпе тăракан колхозсем, вăрмана ĕç вăйĕ çителĕклĕ таран ярса тăманнине пула, вăрман хатĕрлевĕн заданине 30 процент та пурнăçламан. «Парижская Коммуна» колхозăн вăрмана ĕçлеме çуран 9 çын, лашапа 10 çын ямалла пулсан, паянхи куна вăрманта çуран пĕр çын та ĕçлемест, лашапа 5 çын кăна ĕçлет. Çавна пула колхоз вăрман хатĕрлевĕн планне пурнăçласа пыраймасть.

Çураки вăхăчĕ те çывхарса килет. Çавăнпа та колхоз руководителĕсен çак уйăхсенче вăрман хатĕрлевĕн заданине пурнăçлассишĕн пур майсемпе те усă курмалла. Çак ответлă ĕçĕн планне пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хумалла.

М. БОЙКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Аслă шкулсенчи хĕллехи каникул

Аслă шкулсенче февралĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 5-мĕшне çитиччен хĕллехи каникул пулать. Каникул вăхăтĕнче студентсене мĕнле те пулин ĕçе мобилизацилеме юрамасть.

Каникул вăхăтĕнче иккĕмĕш семестра ирттерме лабораторисене, кабинетсене, аудиторисене тата ытти вĕренӳ пӳлĕмĕсене хатĕрлесе хумалла.

Каникул вăхăтĕнче студентсем валли спектакльсем тата кино-сеанссем пулаççĕ. (ТАСС).

ÇУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНЕР

Республикăра 1944 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторсем юсамалли плана мĕн чухлĕ тултарнине кăтартакан

СВОДКА

МТС-сем	Пурĕ юсанă (процентпа)	Январь уйăхĕнчи плана тултарнă (процентпа)	IV-мĕш кварталти тата 1944 ç. янв. уйăхĕнчи плана тултарнă (проц.)
Красноармейски	100,0	250,0	183,3
Шупашкар	92,3	225,0	180,0
Ишлей	78,8	127,2	157,6
Елчĕк	65,5	145,4	142,8
Йĕпреç	82,0	91,6	141,3
Вăрнар	71,6	83,3	135,7
Сĕнтĕр	68,0	110,0	133,0
Комсомольски	88,0	28,5	129,4
Шăхасан	95,2	244,4	129,1
Етĕрне	58,9	142,5	121,0
Куславкка	65,2	140,0	120,0
Чкаловски	59,6	140,0	119,2
Элĕк	63,6	125,0	116,6
Канаш	62,2	92,3	106,4
Шăмăршă	61,1	100,0	104,7
Кувакино	54,2	180,0	102,0
Сĕнтĕрвăрри	60,0	100,0	100,0
Çĕрпÿ	57,6	100,0	100,0
Çĕмĕрле	61,5	100,0	100,0
Вăрмар	48,9	66,6	88,4
Первомайски	60,0	133,3	88,2
Улатăр	46,5	125,0	86,9
Хĕрлĕ Чутай	52,2	50,0	85,7
Тăвай	45,0	28,5	78,2
Пăрачкав	33,6	60,0	64,4
Пĕтĕмпе	63,2	122,6	115,4
Январĕн 25-мĕшĕ тĕлне пулнă	54,9	78,5	—

Çуракине тивĕçлипе хатĕрленмелле

СĔНТЕРВĂРРИ. «Сĕнтĕрпуç» колхоз уйăхлăха çителĕксĕр хутшăнать. Кунта çуракине сÿрĕккĕн хатĕрленеççĕ. Вăрлăх çителĕклĕ таран сортласа хуман. Уя тислĕк кăларма, кĕлпе кайăк-кĕшĕк тислĕкне пухма пачах та тытăнман. Ялхуçалăх машинисене—плугсене, сÿресене, сеялкăсене юсама шутламаççĕ те. Вĕсене тимĕрçĕ лаççи умĕнчех юр шăлса кайнă. Комсомолецсемпе шкул ачисене çуракине хатĕрленес ĕçе явăçтарман. Колхоз председателĕ И. Миронов, парторг Мазюков ку ĕç пирки сахал шухăшлаççĕ-ха. Çуракине халех çителĕклĕ хатĕрленсе, вăйлă тырпул туса илессишĕн тăрăшмалла, тăрăшар!

П. КУЗНЕЦОВ.

Вăрлăх хатĕрлесси начар пырать

ЙĔПРЕÇ. Кунта вăрлăхлăх тырăсене сортласси пачах çителĕксĕр пырать. Паянхи кун тĕлне темиçе вунă колхоз вăрлăхсене сортлама тытăнман, уйрăмăнах ку ĕç Сталин, Киров, Ворошилов ячĕпе тăракан тата „Осоавиахим“ колхозсенче чăтма çук япăх пырать. Районри госсорт участок колхозсене пулăшса пыраймасть. Хăйĕн ĕçне те çиелтен, ячĕшĕн çеç тукаласа пырать. Агроном Квасов юлташ çак ĕçĕн ответлăхне туйса ĕçлемест.

Çуракинче ĕçлемелли тракторсем валли краççин тата чурка хатĕрлес пирки колхозсем шухăшламаççĕ те-ха.

Уя тислĕк кăларасси, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, кĕл, фекали пухасси çителĕксĕр пырать. „Молния“, „Строитель“, „Смычка“ тата ытти чылай колхозсенче вырăнти удобренисене хатĕрлес ĕçе хакламаççĕ. Калинин ячĕпе тăракан колхозра уя 5000 лав тислĕк кăлармалла, кунта пурĕ те 50 лав çеç кăларнă. Молотов ячĕпе тăракан колхоз 5040 лав вырăнне çак вăхăта çитсе те 100 лава яхăн çеç кăларнă.

Уйрăмăнах лашасене çуракине хатĕрлес ĕç япăх тăрать. „Чувашия“ колхозра 15 лаша ĕçе юрăхсăр, Калинин ячĕпе тăракан колхозра вăйсăр лашасем 17 шутланаççĕ. „Молния“ колхозра та лашасене çителĕклĕ пăхмаççĕ, кунта вара ветеринари работникĕсем енчен халех тимлĕ пулăшу кирлĕ.

Туртăм вăйĕ çителĕксĕррине шута илсе, районĕпе 250 вăкăра ĕçе вĕрентме пăхнă, анчах та ку ĕçе тытăнманпа пĕрех.

Çуракине хатĕрленес ĕçе вăраха тăснине малалла чăтма çук. Çуракине вăхăтра хатĕрленни—пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешни пулнине кашни колхозникпа колхозницăна ăнлантарса памалла, вĕсене çак ответлă ĕçе мобилизацилемелле.

П. КУРАКОВ.

Сталино хулинче трамвай çÿреме пуçланă

Сталино хулинче трамвай çÿреме пуçланă. Трамвай хулан варрине Сталин ячĕпе тăракан вокзалпа, Донбасри комсомол 15 çул тултарнă ятпа тăракан вокзалпа тата рабочи поселоксемпе çыхăнтарса тăрать. (ТАСС).

Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх апачĕсен базине лайăхлатмалли мероприятисем çинчен пулса иртнĕ канашлу

Февралĕн 3-мĕшĕнче ВКП(б) Чăваш Обкомĕ ялхуçалăх специалисчĕсемпе малта пыракан колхоз председателĕсен канашлуне туса иртерчĕ. Канашлу колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх апачĕсен базине лайăхлатмалли мероприятисем çинчен сÿтсе явре. Çак ыйтупа ВКП(б) Чăваш Обком секретарĕн выльăх-чĕрлĕх енĕпе ĕçлекен заместителĕ Г. А. Мартынов юлташ доклад туса пачĕ. Мартынов юлташ хăйĕн докладĕнче, пирĕн республикăри колхозсем партипе правительство постановленийĕсене пурнăçласа пырса, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре палăрнă çитĕнÿсем тунине палăртрĕ. Майракаллă шултра выльăхсем, 1942 çулхи январĕн 1-мĕшĕпе танлаштарсан, паянхи куна 75,0 процент, сыснасем —56,0 процент, сурăхсемпе качакасем 119,0 процент ÿснĕ. Çак вăхăтра колхозниксен хуçалăхĕнчи, çавăн пекех предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсенчи выльăх-чĕрлĕх шучĕ те чылай ÿснĕ.

Анчах та республикăра выльăх-чĕрлĕх шучĕ ÿснипе пĕрлех вĕсен апачĕсен бази çителĕклĕ ÿссе пыраймасть, çакă вара выльăх-чĕрлĕхе малалла ÿстерсе пырассине чăрмантарма пултарать. Нумай çул хушши ÿсекен курăксене акмалли çĕр лаптăкĕ çулран çул чакса пырать. Нумай çул ÿсекен курăксене 1939 çулта 59.000 гектар акнă пулсан, 1944 çул тĕлне пурĕ те 38.000 гектар кăна юлнă.

Курăксене акса ÿстерес ĕçре нумай колхозсенче агротехникăна пурнăçласа пымаççĕ, курăк акмалли çĕр лаптăкĕсене тĕрлĕ удобренисемпе çемĕçтермеççĕ, акмалли вăхăта тата нормăсене те пăхăнса пымаççĕ. Курăк акнă лаптăксене çумкурăкĕсенчен тасатмаççĕ, хĕлле çав лаптăксем çинче юр тытса хăварни те çителĕксĕр. Юлашки çулсенче уйри курăксен шутĕнчен тимофеевкăна пĕтĕмĕшпех хĕссе кăларнă. Улăхсене пăхас тата вĕсемпе усă курас ĕçре те пачах йĕркелĕх çук. Вĕсене бригадăсемпе звеносем çумне çирĕплетмен, вĕсемшĕн никам та ответлăха туймасть. Çавна пула улăхсенче çумкурăкĕсем, йывăç тĕмĕсем нумай. Улăхсене сÿрессине, аванлатассине çулран çул туса пыман пирки, вĕсем утă ытла та сахал параççĕ.

Уя акнă курăксене тата улăх утине çителĕксĕр çулса илнĕ пирки, колхозсен тата колхозниксен выльăх апачĕ шутĕнче утă ытла та сахал вырăн йышăнать. Вăл выльăх апачĕсен шутĕнче пĕтĕмпе те 25 процент кăна йышăнать. Уйрăм районсенче, сăмахран Елчĕк районĕнче —3 процент, Чкаловски районĕнче—10 процент, Красноармейски районĕнче 16 процент кăна йышăнать.

Çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсем, ялхуçалăх специалисчĕсем тата колхоз руководителĕсем юлашки çулсенче силос тума кирлĕ культурăсене тата тымар çимĕçсене акасси çине çителĕксĕр пăхрĕç. Силос тумалли культурăсене, сăмахран, иртнĕ çул, план тăрăх 5000 гектар акас вырăнне, пурĕ те 900 гектар кăна акнă. Вĕсене пăхас ĕçре ответсăрлăх пуç пулса тăрать. Силос хывас ĕçре кирлĕ пек йĕркелĕхе пурнăçласа пыни çук-ха. Çавăнпа та хывнă силоспа та çителĕклĕ таран усă курмаççĕ. Колхозсенче йывăç çулçисемпе тата вак-тĕвек туратсемпе пачах усă курмаççĕ. Çавăн пекех çак вăхăта çитсе те крахмал, сăра завочĕсен юлашкисемпе (мязгапа, салат пăттипе) усă курассине йĕркелемен.

Выльăхсен продуктивноçĕ те çителĕксĕр. 1943 çулта кашни сăвакан ĕнерен план тăрăх 1100 литр сĕт суса илес вырăнне 911 литр кăна суса илнĕ, кашни сысна ами пуçне 6 çăвăр çеç çитĕнтернĕ. Государствăна обязательство тăрăх паракан выльăхсен самăрлăхĕ çителĕксĕр. Ку вăл выльăх-чĕрлĕх апачĕсен бази çителĕксĕррипчен килет. Нумай çул ÿсекен курăксен акмалли лаптăкне чакарни пусă çаврăнăшне пăсать тата тĕштырăсен тухăçлăхне те чакарать.

Нумай колхозсенче курăксен вăрлăхлăх участокĕсене лайăх уйăрмаççĕ, е уйăрсан та вăрлăхĕсене йĕркеллĕ пухса илмеççĕ. Вăхăтра пухман, е çапса шĕкĕлчемен пирки вĕсен тухăçлăхĕ ытла та пĕчĕккĕ пулать. Çак куна çитсе те колхозсем 3600 гектар çинчен пухса илнĕ клеверăн вăрлăхне шĕкĕлчесе илмен. Хăшпĕр агрономсем, зоотехниксемпе колхоз председателĕсем: люцерна вăрлăхне пирĕн Чăваш республикинче туса илме çук, тесе шутлаççĕ. Паллах, ку тĕрĕс мар ĕнтĕ.

Нумай çул ÿсекен курăксене акассине чакарни, силос тумалли культурăсен çĕр лаптăкне пĕчĕклетни, хывнă силоспа кирлĕ пек усă курманни тата тымар çимĕçсене акманни малалла выльăхсене ĕрчетес ĕçре чăрмантарса тăрать тата вĕсен продуктивноçне чакарать. Çавăнпа та выльăхсен апачĕ валли курăк акассине, силоспа тата тымар-çимĕçсемпе усă курассине пĕтĕмпех урăхлатмалла. Курăксемпе тымар-çимĕçсене акса выльăх апачĕ валли хатĕрлес ĕçре агротехникăна пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пымалла, силослăх культурăсем акмалла тата силоспа кирлĕ пек усă курмалла.

Доклад тăрăх пренире Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Герасимович, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн представителĕ Кульметов, Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн преподавателĕсем: Наумов, Кружилин, Сычев, Поляков юлташсем, ВКП(б) Шăхасан райкомĕн секретарĕ М. Кузьмин юлташ, Сĕнтĕрвăрри çĕрĕç пай заведующийĕ Железков юлташ, Чăвашсен зоотехникăллă опытнăй станци директорĕ Гурьев юлташ, çак станцийĕн научнăй сотрудникĕ Кузьминская юлташ, Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн главнăй агрономĕ Беляев юлташ, Иккасси сортоучасток заведующийĕ Григорьев юлташ, Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхоз председателĕ Григорьев, Шăхасан районĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Ильин тата Советски районĕнчи «Сеятель» колхоз председателĕ Андреев юлташсем тухса калаçрĕç.

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ Малов юлташ хăйĕн тухса каланă сăмахĕнче чылай районсенче выльăх апачĕсен базине тăвас тата ăна çирĕплетес ĕç çине ытла та çителĕксĕр пăхнине паллă турĕ. Уйрăм районсенче клевер вăрлăхне валли хăварнă участоксене те пĕтĕмпех утăлăх çулса янă. Сăмахран, Чкаловски районра пĕр гектар клевер та вăрлăхлăх хăварман. Клевер çапассине нумай колхозсенче тăсса пыраççĕ тата пучахĕпех акма шутлаççĕ. Ку паллах, тĕрĕс мар. Вăрлăхлăх клевера халех шĕкĕлчесе тасатса хумалла. Выльăхсене тăрантарас тата апата тирпейлĕ тыткалас тĕлĕшре Вăрмар районĕнчи «Дружба» колхозра аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Унта ыраш е çурхи тырăсен улăмĕсене вакласа вĕри шывпа пĕçертсе çитереççĕ, çапла вара выльăх апачĕпе пĕлсе усă кураççĕ, ăна перекетлеççĕ. Çак колхозрах утта авăртса çăнăх туса сыснасене çитереççĕ. «Дружба» колхозăн опычĕпе ытти колхозсем те анлăн усă курмалла.

Юлашкинчен канашлура ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Белков юлташ сăмах тухса каларĕ. Выльăх апатне хатĕрлес ĕçре тимлесе ĕçлемелле. Ку ĕçе партипе совет органĕсен руководителĕсем, çĕрĕç органĕсенче ĕçлекенсем, зоотехниксемпе агрономсем те тивĕçлипе ертсе пымалла. Нумай çул ÿсекен курăксене акассине, улăхсене лайăхлатассине чи паха ĕç вырăнне хумалла. Белков юлташ ялхуçалăх специалисчĕсемпе çĕрĕç органĕсен руководителĕсене выльăх апачĕн базине ÿстерес тата аванлатас пирки пĕтĕм вăй-хала, пĕлĕве хурса ĕçлеме тата çак ĕçе колхозниксен сарлака массине мобилизацилеме чĕнчĕ.

Фермăра ĕçлекенсем хушшинчи ăмăрту

Ишлей районĕнчи «Красный флот» колхозăн чăх-чĕп фермипче Васса Кадушкина юлташ ĕçлет. Вăл хăйне шанса панă ĕçе тÿрĕ кăмăлпа, вăхăтра тата зоотехника вĕрентнĕ пек туса пырать.

Фермăра 28 чăх. Вĕсенчен кăçал 2.679 çăмарта илнĕ. План тăрăх кашни чăхран 70-шер çăмарта илмелле пулнă пулсан, Кадушкина юлташ 95-шер çăмарта ытла илнĕ. Çапла майпа В. Кадушкина юлташ ĕçшĕн хушса тÿлемелли йĕрке тăрăх 107 çăмарта илет.

Колхоз чăх-чĕп ферминчен пысăк тупăш курать. Государствăна çăмарта 1944 çулшăн та панă.

Кайăк-кĕшĕк ферми çитес çул татах та тупăшлăрах пултăр тесе, вăтăлнă чăхсене государствăна аш-какай обязательстви тăрăх панă. Вĕсен вырăнне 70 чăх ĕçнĕрен ÿстернĕ.

Ĕçшĕн хушса тÿленĕ хыççăн В. Кадушкина юлташ 1944 çулта кашни чăхран 100 çăмарта илме сăмах пачĕ.

Ĕне сăвакан С. Падышева юлташ Кадушкина юлташпа ăмăртать. Падышева юлташ кашни ĕнерен 1.100 литр сăвас вырăнне 1.364 литр сĕт сунă. Ĕçшĕн хушса тÿлес йĕркепе ăна 216 литр сĕт панă.

Ферма заведующийĕ Е. Яшмолкина юлташ, «Отличник социалистического хозяйства» значокне илнĕскер, кашни сысна аминчен планпа 11 çура илес вырăнне 15,7 çура илсе çитĕнтернĕ. Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те ирттерсе тултарнă. 1944 çулшăн государствăна аш-какай парса татнă.

Е. ФИЛИППОВА,
Участокри зоотехник.

Ют çĕршывсенче

Америка хаçачĕсем В. М. Молотов юлташăн доклачĕ çинчен

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен хаçачĕсем В. М. Молотов юлташăн СССР Верховный Совечĕн Сессийĕнче тунă доклачĕ çинчен нумай çыраççĕ. «Нью-Йорк таймс» тата «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатсем Молотов юлташăн докладне пĕтĕмпех пичетлесе кăларнă, ытти хаçатсем çав докладăн нумай вырăнĕсене илсе пичетленĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçат çырнă тăрăх, Вашингтонра «ют çĕршыв сăнавçисем» Совет Союзĕн тулашри çыхăнăвĕсен системине урăхлатса йĕркелени çинчен çапла шутлаççĕ пулать: вăл Совет Союзĕ тĕнчери вăрçă хыççăнхи организацисенче хăйĕн позицине вăйлатма тăрăшнине пĕлтерет, тесе калаççĕ пулать.

Ассошиэйтед пресс агентствин Нью-Йоркри корреспонденчĕ урăхла калать: хăшпĕр сăнавçăсем каланă тăрăх, тет вăл, Совет Союзĕн Верховный Совечĕ йышăннисем Совет Союзĕ вăрçă хыççăнхи пĕтĕм тĕнчери конференцисемпе организацисенче хăйĕн позицине вăйлатма тăрăшнинчен ытларах çакна палăртаççĕ: Совет Союзĕ вăрçă хыççăн демократие сарса ярасшăн тата государство чиккисен ыйтăвĕсене туслăн татса пама шухăшасшăн.

Совет Союзĕнче Америка посолĕ пулса ĕçленĕ Дэвис Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчĕпе калаçнă чухне Совет Союзĕн çĕнĕ мероприятийĕсене ырланă.

«П М» хаçат пысăк умстатья пичетлесе кăларнă, çав статьян авторĕ, «Либерал» тесе ялă пуснăскер, Совет Союзĕн политики тĕлĕшпе çынсене иккĕлентерме тăрăшать.

Англи хаçачĕсем Оборона Халăх Комиссариачĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне урăхлатса йĕркелени çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио В. М. Молотов юлташăн СССР Верховный Советĕнче Оборона Халăх Комиссариачĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатсенчен союзлă республикăн Халăх Комиссариачĕ туса хурасси çинчен тунă докладне анлăн сарнă. Рейтер агентстви çапла çырать: Англин кăçхине тухнă хаçачĕсем çав решение ырлаççĕ, тет.

Рейтер агентствин Мускаври специальнăй корреспонденчĕ Гарольд Кинг çапла çырать: «Молотовăн Верховный Совета тăратнă сĕнĕвĕ Конституцие юлашки çулсенче улăштарнисенчен чи нумай улăштарни пулса тăрать. Çав сĕнĕве пурнăçа кĕртме кăшт вăхăт кирлĕ пулĕ, анчах та çак плана ăна халех усăллă план туса хурĕç. Çакă паллă: Совет Союзне кĕрекен кашни республикăн ют çĕршывсенче хăйĕн дипломатиллĕ представительстви пулать. Эпир çапла пулĕ тесе те шухăшлама пултаратпăр: мирлĕ конференцире совет делегацийĕпе пĕрле тата 16 делегата — кашни республикăран килнĕ пĕрер делегата курăпăр».

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Англири мĕнпур хаçатсем Оборона Халăх Комиссариачĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариатне пĕтĕм союзлă комиссариатсенчен союзлă республикăн Халăх Комиссариачĕ тăвасси çинчен СССР Верховный Советĕнче В. М. Молотов юлташ тунă доклад çинчен çыраççĕ.

Рейтер агентствин дипломатиллĕ ĕçсем çинчен çыракан сотрудникĕ Рендел Нил çапла çырать: Англири авторитетлă çынсем çав паха ĕç çине пысăк интереспа тата лайăх ăнланса пăхаççĕ. «Хальхи реформа çак теорирен тухса тăрать пулмалла, — тесе çырать Нил:—юлашки çирĕм çул хушшинче совет республикисем хăйсен социальнăй аталанăвĕпе промышленность аталанăвĕнче ача чухнехи вăхăтран иртсе кайнă ĕнтĕ».

Хаçатсем çав комиссариатсене урăхлатса йĕркелени çинчен тĕрлĕ шухăшсем, час-часах пĕр-пĕрне хирĕç пыракан шухăшсем каласа параççĕ.

«Дейли мейл» хаçат çапла калать: сессин решенийĕсем «вырăс революцийĕ пулнăранпа конституцие чи нумай улăштарни» пулса тăраççĕ, тет.

«Таймс» хаçат çапла çырать: халăх комиссариачĕсене урăхлатса йĕркеленине «Англире пысăк интереспа тата кăмăлласа кĕтсе илĕç», тет.

«Дейли телеграф энд миринг пост» çапла çырать: Конституцири улшăнусем Совет Союзĕн хальхи е малашнехи хăватне улăштармĕç, çав улшăнусем вĕсем, «Молотов каланă сăмахăн нумай вырăнĕсем пекех, пĕрлешÿллĕ нацисем пĕр-пĕринпе нумай вăхăт хушши килĕштерсе ĕçлеме тăрăшнине кăтартаççĕ, Мускаврипе Тегеранри конференцисенче çавăн пек тăрăшни питĕ ÿççăн палăрнăччĕ», тет.

„Аслă паттăрлăх“

АНГЛИ ХАÇАЧĔСЕМ СОВЕТ ÇАРĔСЕН ЛЕНИНГРАД ФРОНТĔНЧИ ÇИТĔНĔВĔСЕМ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Англи хаçачĕсем статьясемпе обзорсенче Ленинград патĕнче гитлерла çарсене аркатса тăкнă Хĕрлĕ Çарăн пысăк çитĕнĕвĕсем çинчен çыраççĕ. «Пур ирĕклĕ халăхсем тата гитлеровецсем пусмăрланă халăхсем те,—тесе çырать «Стар» хаçат, — нимĕçсене Ленинград патĕнче аркатса тăкни нацистсен хăватне хавшатас ĕçре мĕнле вырăн йышăннине ăнланаççĕ. Ленинград тахçанах ытти хуласем хушшинче хальхи вăрçăн геройĕ вырăнне йышăннă». Ленинград патĕнчи çапăçу,—тесе çырать хаçат,—нимĕçсене хăратсах пăрахрĕ, вĕсем Парижра, Брюссельре, Амстердамра, Варшавăра, Ослора вăхăтлăха кăна хуçа пулни çинчен туйтарса хăварчĕ.

«Ивнинг стандард» хаçат: совет командованийĕн стратегийĕ, совет салтакĕсемпе халăх хăвачĕ çĕнтерÿ тăвас ĕçре татăклă вырăн йышăнчĕ, тесе пĕлтерет.

Ленинград хулине тăшман блокадинчен хăтарнине паллă туса, редакцирен çырнă статьяра «Манчестер гардиен» хаçат çапла калать: халĕ, Ленинграда тĕппипех ирĕке кăларнă хыççăн, вырăссем мĕн тери аслă ĕç тума пултарнине тата уççăнтарах курма пулать. «Мускав патĕнчи, Ленинград тата Сталинград патĕнчи çĕнтерÿсем,—тесе çырать хаçат, — çав тери лайăх организациленинчен, малалла курма пултарнинчен тата ĕçсене вăхăтра туса пынинчен килнĕ. Пуринчен ытла вырăссен никам çĕнтерейми хăвачĕ паллă вырăн йышăнчĕ. Вăл ĕнтĕ çав тери тăрăшса тунă ĕçсене тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкасси патне илсе пычĕ».

АМЕРИКА ÇАРĔСЕМ МАРШАЛЬ УТРАВĔСЕМ ÇИНЕ ПЫРСА АННĂ

ВАШИНГТОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт пресс-конференцире çапла каланă: Америка çарĕсен хăватлă вăйĕсем Маршаль утравĕсем çине пырса аннă. Тăшман хирĕç тăрса хытă çапăçнă пулин те, операцисем ăнăçлăн вăйланса пыраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океанĕнчи флочĕн командованийĕ çапла пĕлтерет: Америкăн Маршаль утравĕсем çине аннă çарĕсем Рои утравне (Ксадьелин утравĕнчен çурçĕртерехре) тытса илнĕ тата Квадьевинпа Наму утравĕсем çине пырса аннă.

Ку утравсем çинчи операцисем ăнăçлăн вăйланса пыраççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). США-н Лăпкă океан çинчи флочĕн командованийĕ çапла пĕлтерет: Америка çарĕсем Рои утравĕсĕр пуçне Наму утравне те пĕтĕмĕшпех тытса илнĕ. Квадьелин утравĕ çинче Япони çарĕсем çаплах хирĕç тăраççĕ.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официально çапла пĕлтереççĕ: паян кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, американецсен инçене вĕçекен истребителĕсем хÿтĕлесе пынипе тата союзниксен истребителĕсем пулăшнипе, Хĕвеланăç Германири объектсене тапаннă.

ТУРЦИРЕ ÇĔР ЧĔТРЕНĔ

АНКАРА, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян ирхине 6 сехет те 30 минутра Турцире çĕр хытă чĕтрерĕ. Малтанхи хыпарсем тăрăх, çĕр пуринчен вăйлăрах Болу филайетĕнче чĕтренĕ. Çав филайетри хуласенчен пĕри—Гереде—пысăк сиен курнă. Хулари çуртсен 90 процентĕнче кая мар пачах ишĕлсе аннă. Çынсем нумай вилсе пĕтнĕ е аманнă пулĕ, тесе шутлаççĕ. Болу филасчĕпе, чугун çулпа тата телеграфпа çыхăну татăлса тасси чарăннă. Турцин ытти чылай районĕсенче те, вăл шутра Анкара хулинче те, çĕр хытах чĕтре-чĕтре илнĕ. Хусканусем халĕ те сисĕнеççĕ.

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен тĕп ставки çапла пĕлтерет: Анцио секторĕнчи фронтра, çавăн пекех тата Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче хаяр çапăçусем пынă. Союзниксен çарĕсем, тăшман хытă хирĕç тăнă пулин те, кĕпер умĕнчи укрепление аслăлатнă, тăшманăн контратакисене пурне те сирсе янă. Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче французсемпе американецсен чаçĕсем тусем çинче Кассино хулинчен çурçĕртерехре малалла нумай инçе кĕрсе кайнă, вĕсем халĕ тăшмана унăн çавăнти çирĕплетнĕ пунктне тытса илессипе хытах хăратаççĕ.

Февралĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çĕрлехи бомбардировщиксем тăшманăн Мариборги (Çурçĕр Югославия) объекчĕсене атакăланă. Енер сывлăшра вăйлă операцисемех пулман.

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен тĕп ставки çапла пĕлтерет: Америкăн 5-мĕш армийĕн тĕп фронтĕнче союзниксен çарĕсем Кассино хули тулашĕнче хаярран çапăçаççĕ. Кассино хулинчен çурçĕртерехре тусем çинче тăшман контратакăсем тунă. Союзниксен çарĕсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. Анцио районĕнче Америкăн 5-мĕш армийĕн чаçĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Англин 8-мĕш армийĕн фронтĕнче союзниксен çарĕсем Адриатически тинĕс хĕрринчен 23 миля хушши аякарах вырнаçса ларнă Торричелла ятлă яла тытса илнĕ.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ РИМ ХУЛИНЕ ИШĔЛТЕРМЕ ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсенче çырнă тăрăх, Рим хулинчен тарнă çынсем çапла пĕлтереççĕ: нимĕçсем Рим хулинчи халăха урăх çĕре куçараççĕ. Вĕсем хулара минерсен йышлă мар отрячĕсене кăна хăвараççĕ. Ку минерсем хулари çуртсене сирпĕнтерсе яма юлаççĕ. Рим хулинчен тухса тарса ытти çĕршывсене çитнĕ çынсем каланипе, нимĕçсем хулари чи кирлĕ урамсенче, пĕтĕм хулари халăха кирлĕ çуртсенче (сăмахран, электричество станцийĕсенче, шыв парса тăракан башньăсенче) йăлтах минăсем лартса тухнă.

ЮГОСЛАВИРИ ВАРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЖЕНЕВА, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем Черногорире нимĕçсен çарĕсемпе четниксен отрячĕсене çĕмĕрсе тăкса, каялла ывăтса янă. Боснире халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем, тĕллĕн-тĕллĕн çапăçса, малалла тапăнса пыраççĕ. Нимĕçсем Травник хулинчен атака пуçласа янă, анчах та гитлеровецсен атаки путланса ларнă.

Словенире Югославири халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем темиçе кун хушши нимĕçсен тата усташасен отрячĕсемпе хытă çапăçнă. Çав нимĕçсемпе усташасем халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар тытса илнĕ территори çине кĕрсе каяссăн пулнă. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн Словенири чаçĕсем тăшмантан Чаглин тата Плоча хулисене ирĕке кăларнă, вăрçă трофейĕсем нумай тытса илнĕ. Нимĕçсен 354 салтакĕпе 3 офицерне тыткăна илнĕ.

Пĕлтерÿ

Ыран, февралĕн 7-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) горкомĕн парткабинетĕнче (Чувашски ур., 6) агитколлективсен руководителĕсем, докладчиксем тата беседчиксем валли инструкциллĕ доклад пулать. Доклад теми:

«СССР Верховный Совечĕн 1-мĕш созыври Х-мĕш Сессийĕ».

Докладчик П. Л. Лебедев юлташ.

ВКП(б) горкомĕн парткабинечĕ.

Ответлă редакторшăн
П. Т. ЗОЛОТОВ.

Госсортфондăн Чăваш республикинчи конторине çакăн пек работниксем кирлĕ: главнăй бухгалтер, старши агроном, агрономсем, механиксем, вăрлăх базисен старши бухгалтерĕсем, хатĕрлев пункчĕсен заведующийĕсем, счетоводсем, лаборантсем Шупашкарта тата районсенче ĕçлеме.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Набережная Волги, 13.
2—1

Чăвашсен ялхуçалăх институтне аслă шкултан вĕренсе тухнă старши лаборантсем тата вăтам шкултан вĕренсе тухнă лаборантсем кирлĕ. Институтăн вĕренÿ хуçалăхне аслă шкултан вĕренсе тухнă зоотехник кирлĕ. Хуçалăхăн адресĕ çапла: Ишлей районĕ, Ишек (Шупашкартан 25 километртра).

Шупашкарти арман комбинатне старши бухгалтер тата металл ĕçлекен токарь тимĕрçĕ кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Урицкого, 15, Контора мелькомбинатĕ. Телефон 3—00.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, секретарьпе заместителĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00028 Типография №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.